лăксем инçене чупакан çилçунатутсем тытнипе те паллă. Йăйăнсемпе акатуйсенче вĕсем пушкăртсене самаях тĕлĕнтерессĕ, ял ятне сĕклене́сем сĕклесе тăрассĕ.

Уралъен таврашĕнчи чăвашсем тăван халăх йăли-йĕркине çирĕп тытса пурăнассĕ. Нарспи пек хитре тĕрĕсем тĕрлессĕ, шăпăр каласа туй тăвассĕ, çĕр пин юрă асра тытассĕ.

Пишпÿлекрен Слакпуçне каякан çул хĕрринче пăслăксем шур чултан икĕ хутлă Культура керменĕ сĕклесе лартрĕç. Мускав передачисене радиопа та, телевиденипе те курма илтме пултарассĕ. Килсерен пăрăхсем тăрăх газ кĕртнĕ, сăлкуçсенчен килех шыв юхать. Кирпĕч çапакан завод тунăранпа ял çыннисем хулари пек илемлĕ çуртсем лартассĕ.

«Виçтÿпе çăлтăрĕсем» ансамбль юрлать», — пĕлтерессĕ концертсенче, пăслăк пикисем сцена çине тухсан. Сăпайлă, илемлĕ тумпа хăйсем. Чăваш, пушкăрт, тутар, вырăс юррисене тĕлĕнмелле шăрантарассĕ.

Пĕлтĕр Пăслăк хĕрĕ-каччисем Шуршăлпа Тăвайра пулса курчĕç, унти художество пултарулăх коллективĕсемпе туслăн паллашса сыпăхланчĕç, пĕр-пĕрин патне концертсемпе çÿреме калаçса татăлчĕç. Тăвайсем нумай та кĕттермерĕç. Пăслăка çитсе, 900 çухрăмра пурăнакан Уралъен чăвашĕсене ăшă сăмахпа, тăван юрă-кĕвĕпе савăнтарчĕç. Сак вăхăтран пуçласа Виçтÿпе те Чăвашъенпе туслашрĕ.

Пушкăртстанри хаклă хăнасем пирĕн республикăна килнĕ ятпа чăвашсен паллă композиторĕ Филипп Лукин Александр Аслут поэт сăмахĕсем тăрăх ятарласа «Виçтÿпе» юрă çырчĕ. Чăвашрадио квартетпа юрламалли çак произведение студире çырса илнĕ. Часах вăл эфира та тухĕ.

Çу уйăхĕн пуçламăшĕнче Пăслăкра тепĕр паллă ĕç пулса иртрĕ — кунти Культура çуртĕнче Шупашкартан илсе килнĕ «Чăвашъен асамачĕ» фотовыставка уçăлчĕ. 80 ĕçрен тăракан выставкăна çак йĕркесен авторĕ хăйĕн ентешĕсене ялан-лăхах парнелерĕ.

**Виталий ИСАЕВ,**
**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ.**

**ÿКЕРЧĔКСЕМ ÇИНЧЕ: Пăслăк хĕрĕ; акатуй нихçан та ăмăртусăр иртмест; «Виçтÿпе çăлтăрĕсем» ансамбльпе паллашăвăсем; чăваш халăх поэчĕ Я. Г. Ухсай ентешĕсем патĕнче.**

**ÿкерчĕксем авторăн.**

---

*● Ф. П. Павлов çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май*

# КОМПОЗИТОР ТРАГЕДИЙĔ

***Хăшпĕр çыравçăсен ĕçĕ-хĕлĕнче те, халăхра та чăваш композиторĕ тата драматургĕ Федор Павлович Павловăн «кил ăшчиккинчи инкекĕсем» пирки тĕрлĕ легенда пур. Эпĕ, ун çинчен кĕнеке çырма хатĕрленнĕ май, сахал мар материал пухрăм. Çавсемпе паллашма сĕнесшĕн сире.***

***Автор.***

Капитолина Никитична Эсливанова Федор Павлов пирки вăл «питĕ час çилленсе каякан çын» тенĕччĕ. Кунта калаçу композиторăн çамрăклăхĕ пирки пырать. Мĕншĕн тесен Капитолина Никитична 1913 çулта Степан Максимова качча тухнă хыççăн Ф. Павловпа тĕл пулма пăрахать. 1928 çулхи юлашки тĕлпулура, паллах, композитор хăй характерĕне ăна кăтартса ĕлкĕреймен.

Петĕр Хусанкай Федор Павлов пирки çырнисене аса илер-ха. Поэт ÿнта композитор виличчен пĕр çул маларахри (1930 ç.) тĕлпулу çинчен каласа парать.

«Акă вăл, артистсем çÿрекен хыçалти алăкран кĕрсе, сăп-çăмăл уттипе хăпарать. Хористсем хĕпĕртесçĕ. Хора чун кĕрет.

Дирижер та савăнăçлă темелле. Унăн та хăтланкаларăшĕсем кăмăллă, уçă. Анчах, тинкеререх пăхсан, вăл раснах ырханланнине асăрхатăн. Пиçĕ çинчи кĕтессисем нумайрах та шĕвĕртерех пек. Тĕсĕ те сарăрах шупкалса кайнă. Çыншăн кăмăллă хăтланкаларăш таçта çунса чĕрене пĕçертекен хурлăха витмелли цивилизаци çитти кăна иккен.

Йывăрччĕ çав кас çак чăннипех те пысăк культурăллă этемĕн кил ăшчиккинчи инкекĕсене пĕлекене ун çине пăхмашкăн. Халĕ çав инкексемех композиторăн ĕмĕрне кĕскетсе татрĕç текен сассенче тĕрĕсси те пур пек туйăнать».

Çак саманта илсе кăтартни те пире малалла кирлĕ пулĕ:

«1930 çулта эпĕ çав пысăк ăстан чунĕ çурмашар пайланнине тата уççăнрах куртăм.

Хăш енĕ вăйлăрах пулнă? Халех пат татса калама хĕн. «Сулра» канмалла çырнă япала пек çеç туйăнать. «Шупашкар туйи» — халăх пултарулăхĕнчен илсе, нумай мар улăштарса тунă пĕр сĕклепÿллĕ кĕвĕ, марша çывăхараканскер.

«Вĕлле хурчĕ» — тĕп хăйĕн: сăвви те, кĕвви те. Тарăн, чĕрене тивекен музыка. «Ялта» — трагедилле пафосла, вăйлă çынлă романтизм. Çаксенче шырамалла пек сав икĕ сарлака искусствăра Павăл Хĕветĕрĕн чунĕ хăш май выртнине».

«Таçта сунса чĕрене пĕçертекен мĕнле хурлăх», «кил ăшчиккинчи мĕнле инкексем» çинчен асăнать поэт? Тен, ку унăн фантазийĕ çеç? Анчах Ф. Павловăн «кил ăшчиккинчи» пурнăçне пĕлекенсем татах та пулнă-мĕн.

Никифор Васанкка мĕн каланине вуласа пăхар:

«Федор Павловичăн хăй пурнăçĕнчи трагедийĕ: кăмăлланă хĕре илейменни, çемьере телей тупайманни, ача-пăчасăр юлма тивни, килĕштерсе пурăнайманни тата ытти те общесăври интеллигентла сийсен кăмăлĕпе пĕр пек ĕнерÿллĕ янăрама пуçлать, пĕр валакпа сăрхăнса юрă кĕввине кĕрет...»

Тата тепĕр штрих: Руфа Герасимовна Золотова калана тăрăх, Федор Павлович çемйен ĕмĕрхи телейсĕр шăпи пирки час-часах ÿпкелешсе каласнă пулать.

Çапла вара, Ф. Павловăн «кил ăшчиккинчи» пурнăçне тишкерсе тухни вулакансемшĕн интереслĕ пуласçăн туйăнать.

Малтанах Ф. Павловăн чи малтанхи сăввисенчен пĕрин çинче чарăйса тăрăпăр. Автор ăна ят паман. Анчах, сăввăн пуçламăшне кура, литературоведсем ăна «Савнă хĕр» тесе асăнассĕ. Сăвăра чун-чĕрене ыраттаракан çакăн пек йĕркесем пур:

**Сана чунтан юратса**
**Ыталаса манрăттăм,**
**Сана пăхса, савăнса**
**Ĕмĕр санпа пурнăттăм...**
**Ытарайман пиркипе**
**Ыталаса йĕреттĕм,**
**Сана пăхса, савăнса**
**Санпа кăна пурнăттăм.**

**«Экспромт» ятлă тепĕр сăввипе паллашар:**

**Маншăн куçĕ çуталмасть,**
**Сÿхе тути йăл кулмасть,**
**Яштак пилĕк авăнмасть,**
**Чăмăр кăкри хумханмасть...**
**Ман еннелле çаврăнмасть,**
**Ылтăн пуçне каçартать,**
**Мăн кăмăлне палăртать—**
**Ман чĕрене çунтарать...**

ăна урăх çĕрте шырамалла — ĕмĕрлĕх пултăр вăл çыхăну, мĕн виличченех!

Çуртă пек çунса кайсассăн та, пĕтĕм пурнăçра творчествăлла ĕçе халалламалла. Федор Павлович апрель уйăхĕнчех Ленинградри консерваторие кĕме заявлени çырать. Ăс-тăпа, чун-чĕрене тыллакан шухăшсене парăнтарас тесе, Ф. Павлов çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлет, консерваторие кĕме хатĕрленет. Яланах хăй çинчен систерсе тăракан ӳпке чирĕ, нерва системи йăшни, килйыш драми ăна кунран-кунах катастрофа патнелле сĕтĕрĕççĕ. Çитменнине тата Ленинграда каймалла. Федор Павловичăн йăшнă ӳпкишĕн çурçĕр климачĕ юнлă суран çине тăвар сапса тăнă евĕрех сиенлĕ. Анчах Мускава кайма пĕрре те кăмăл çук: унта Степан Максимов вĕренет. Ĕмĕрлĕхех унăнне те, Капитолинăнне те кунçулĕсене пăсса хăварнă çак çынпа кунсеренех тĕл пуласси Павловшăн пачах та илĕртӳллĕ япала мар. Çапла, Нева хĕрри композитор пурнăçĕнче тепĕр çыран, тен, юлашки, пулса юлать.

Ленинград консерваторийĕн профессорĕ Ю. Н. Тюлин каланă тăрăх, Ф. Павлов кунта та Олимп ту тăррине аскетла чăтăмлăхпа тапаланса хăпарать. «Федор Павлович отличался необыкновенной работоспособностью, — çырать Тюлин профессор, — был подлинным энтузиастом учебы. Помню, что он стал приходить в класс совершенно больной, не желая пропустить ни одного урока... Дорвавшись до учебы, Федор Павлович, к сожалению, не щадил себя, не оберегал своего, очевидно, уже подорванного здоровья».

Апрель пуçламăшĕнче Ф. Павлов Сочие çитсе ӳкет, Уч-Дере санаторине вырнаçать. Май уйăхĕ те иртет, вăл çаплах сывалаймасть. Июнь перле çитет...

Малалла çак легендăна сăмах парар. Вăл та Г. Комиссаров асаилĕвĕсенчен.

Федор Павлович пĕррехинче темле майпа Иван Родионович Бахромеев профессор патне лекет имĕш Сочире. Профессор, чирлĕ çын документчĕсемпе паллашнă май, сасăпа мăкăртатать:

— Павлов Федор Павлович... Из Чувашии...

Çак самантра юнашар кабинетран Лидия Николаевна туха парать. Икĕ çул хушши курман арăмĕпе тĕл пулсан, Федор Павлович куçĕ хуралса килет:

— Ой, Лидюша!..

Çавăнтах çĕре тĕшĕрĕлсе анать...

Çапла вĕçленет драма. Вилни çинчен пахă ĕнентерӳ хутĕнче «пуç мими шыççипе вилнĕ» тесе çырса хунă.

Ф. Павлова Сочири хула масарĕнче пытараççĕ. С. Максимов композитор унта самолетпа вĕçсе каять. Пытарнă çĕре ĕлкĕреймест. Уч-Деререн тухса кайнă чухне вăл унта пурăнакан пĕр грекпа Павел Григорьевич Кулуапа çапла каласса татăлать: Кулу чăваш композиторĕн вилтăприне çулсеренех тирпей-илем кӳрĕ, Степан Максимович ăна çакăншăн укçа куçарса парса тăрĕ.

Халь ĕнтĕ Ф. Павлов вилтăприне тупма та май çук. Иртнĕ вăрçă сулĕсенче Федор Павловича пытарнă масар урлă икĕ шоссе хывнă. Композитора пĕлнĕ çынсем те тахçанах çĕре кĕнĕ.

**Иван АХРАТ.**

# ÇЫНРА ÇЫНЛĂХ ТУЙĂМНЕ ВĂРАТНĂ

**(Чăваш халăх артистки Е. В. Шорникова 80 çул тултарчĕ)**

Вырăссен паллă писателĕ А. М. Горький пурнăçа тарăн та нумай енлĕ пĕлӳ паракан университет тенĕ. Елена Васильевна Шорниковăшăн та пурнăç чăн-чăн ăсталăх шкулĕ пулнă. Темĕнле инкек-нуша витĕр те тухнă вăл.

Пулас артистка 1912 çулхи майăн 1-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Уйкасра хресчен килйышĕнче çуралнă. Йышлă çемье пулнă вĕсен, 12 ача. Анчах çити-çитми пурнăçра пĕрин хыççăн тепри вилнĕ вĕсем. 1921 çулхи выçлăх чух ашшĕ çĕре кĕнĕ. Ялти куштансем Совет влаçĕ майлă пулнăшăн хĕненĕ ăна. Тепĕр икĕ çултан амăшĕ те масар çине ăсаннă. Тăхăр çулхи Елюк шăллĕпе пиччĕшĕсемшĕн амăшĕ вырăнĕнче юлнă. Темиçе уйăх çеç вĕренме тивнĕ ăна шкулта. Выçă вилес мар тесе чăпта çапма та, коммунăра ĕçлеме те тивнĕ унăн. Çапах та хастар хĕрача вĕренес шухăша пăрахман, пушă вăхăт тупса ликбеза çӳренĕ. Вĕренес шухăшпах вăл 1930 çулта Шупашкара тухса килнĕ. Анчах ĕмĕте пурнăçлама çăмăлах пулман ăна. Çамрăк хĕрĕн тарçăра та, ытти ĕçре те ĕçлеме тивет. Çапах Елюк малаллах талпăнать. Комсомола кĕрет, драмкружок занятийĕсене çӳрет. Совпартшкула кĕме май тупать. Кунти драмкружока ертсе пынă çамрăк артист Б. Алексеев вара ăна театр искусствипе сывăхрах паллаштарать, артист ĕçне юратма вĕрентет. 1934 çулта пулас артистка Шупашкарти театр училищине кайса кĕрет. Училище хыççăн ăна Чăваш академи драма театрĕнче ĕçлеме хăвараççĕ. Çавăнтанпах Шорникова юратнă ĕçе пĕтĕм чунпе парать. 200 ытла роль вылянă вăл çак тарана çитиччен.

Малтанхи рольсенех (А. Н. Островскин «Аслати» драминчи Катерина, Л. Сейфуллинан «Виринея» пьесинчи Виринея) пысăк ăсталăхпа вылять çамрăк артистка. Пĕр евĕрлĕ сăнарсем мар, хире-хирĕçле характерлă вĕсем: пĕри лăпкă, анчах тарăн та хĕрӳ шухăшлă; тепри — хăюллă та çирĕп кăмăллă, хăй тивĕçне хӳтĕлеме пултараканскер. Пĕрпеклĕх те пур вĕсен: ирĕклĕхе туртăнни, этемле пурăнас шухăшлă пулни. Артистка вара, хура-шура курнăскер, этеме хисепленĕ, ун тивĕçне хакланă. Йывăр çĕклем тиенĕ вăл хăй çине. Уйрăмах Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çулĕсенче хĕн килнĕ ăна. Фронтра хаяр çапăçусем пынă, тылра та ватăсемпе вĕтĕсем, хĕрарăмсем çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленĕ. Артистсем те çав йывăрлăха халăхпа пĕрле пайланă. Гастроле кайсан, 20—25 километр таран çуран утнă, йĕпе-сапара та, çил-тăманра та. Окоп чавакансем патне, госпитале аманнисем патне çӳренĕ. Куççуль юхтарас чух кулнă, куляннас чух — юрланă. «Упăшкапа шăллăм-пиччесем фронтра çапăçаççĕ, хыпар-хăнар сайра килет. Килте икĕ ача, асли те виççĕре çеç, кӳршĕ хĕрарăмĕ патне пăрахса хăварма тивет-чĕ, — каласа парать Елена Васильевна. — Çыннисем савăнăçлă спектакльсем лартма, хаваслă концертсем пама ыйтаççĕ. Хуйхине эпир ахаль те нумай куратпăр, теççĕ. Куççуле шăлатăн та кулас мар çĕртен кулатăн. Кăнтăрла колхозниксемпе çĕрулми лартнă, утă çулнă, тырă вырнă, каçпа хамăрăн артист ĕçне тунă...»

Паллах, ку вăхăтра Шорниковăшăн вăрçă теми çывăх пулнă. «Лиза Короткова», «Икĕ юлташ» пьесăсенче тĕп рольсене вылять вăл, тылри хĕрарăм-организаторсен сăнарне тарăннăн уçса кăтартать.

Кунран кун хăй ăсталăхне ӳстерсе пырать вăл, пьеса геройĕн чунне ăнланма тăрăшать. Шухăшласан, тĕлĕнмелле: нихăçан Африкăра пулса курманскер, Кăнтăр Африка хĕрарĕмĕн (П. Абрахамсăн «Аслати çулĕпе» пьесинчи Фиэта) рольне те ăста вылять, кăркăс колхозницин (Ч. Айтматовăн «Манăн хĕрлĕ тутăрлă тополĕм» драми) шухăш-кăмăлне те лайăх туять, Лушка украинка сăнарне те (А. Макаенокăн «Лĕвон арăмĕ орбитăра» комедийĕ), Захаровна вырăс хĕрарăмне те (М. Горькин